чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

185/26591/ № | Ытлари кун, 2014, авăн (сентябрь), 23 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

НАЦИСЕН КРОСĔ — 2014

# Маттуррисемпе хастаррисем чупнă, штанга та йăтнă

## Республикăри чи пысăк ăмăртăва 59 пин ытла çын хутшăннă

***Вырсарни кун «Нацисен кросĕ» республикăри пин-пин çынна спорт уявне йыхравларĕ. Кунĕ те калама çук илемлĕччĕ: кĕрхи ват ăшши чупакансене хĕвеллĕ уяр çанталăкпа савăнтарчĕ. Çавăнпах-тăр ăмăртура тупăшакансен йышĕ сахал марччĕ. ЧР Спорт министерствин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – çĕр-шыври чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ спорт мероприятийĕсенчен пĕрне кăçал 59 пин ытла çын хутшăннă.***



Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Шупашкарта пурăнакансем кӳлмек хĕррине васкарĕç: республикăри тĕп старт унта иртетçке. Кросс пуçланиччен пурте зарядкăна тăчĕç. Ăна Чăваш Енри паллă çынсем – Европа тата тĕнче чемпионĕпе Алексей Германовпа ЧР аэробика федерацийĕн хастарĕсем, «Чебоксарские ястребы» баскетбол командипе вĕсен тренерĕ Сергей Худаев – ирттерчĕç. Хаваслă та илемлĕ кĕвĕ-çемĕ хумĕпе зарядкăна тăнисем ӳт-пĕве çемçетрĕç. «Юрлакансен уйĕнче» вырнаçтарнă тренажерсен лапамĕнчен те çын таталăма пĕлмерĕ, старта тухиччен пурте вăй пухрĕç ахăртнех. Вăйлисемпе хăюллисем вара штанга йăтса тĕлĕнтерчĕç. Инçех мар, сăртлă-айлăмлă вырăнта, байкерсем хăйсен ăсталăхĕпе савăнтарчĕç.

Спорт уявне ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ. «Паян кунта сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансем пуханнă. Сире спортпа туслă пулнăшăн тав тăватăп, малашне те маттур та хастар пулăр», – терĕ вăл. Михаил Васильевич çавăн пекех кросра вăй виçекенсен йышĕ çултан çул нумайланнине палăртрĕ, Чăваш Енре çывăх кунсенче Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ иртессине аса илтерчĕ. Ăмăртăва Олимп чемпионки Елена Николаева, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, депутатсем, организаци-предприяти ертӳçисем те хутшăнчĕç. Вĕсем тепĕр çул Шупашкарта иртекен командăсен Европа чемпионатне халалласа 2015 метрлă дистанцире чупрĕç.

Ăмăрту тĕп судйи пулма кăçал РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерне, Олимп вăййисен бронза призерне Татьяна Архиповăна çирĕплетнĕ. Вăл та кӳлмек хĕррине пухăннисене спорт уявĕпе саламларĕ. Старта чи малтан садике çӳрекенсемпе шкул ачисем тухрĕç. Тĕрлĕ дистанцире хулари 48 тата 60-мĕш шкулсенче вĕренекенсем София Калитова, Марина Крупнова тата Олег Орлов пуринчен вăйлăрах пулчĕç. Студентсен хушшинче Шупашкарти строительствăпа хула хуçалăхĕн техникумĕнчи Елена Петухова, Надежда Белкова, Денис Воробьев, Ксения Левина, Чăваш патшалăх университетĕнчи Алиса Патьяновăпа Екатерина Львова мала тухрĕç. Ытти ушкăнра та хастаррисемпе хăюллисем палăрчĕç. Пурне те тав хучĕсемпе тата медальсемпе хавхалантарчĕç. Ятарлă парнене тивĕçекенсем – 84-ри Миранда Кольцовăпа чылай ăмăртăва хутшăнакан 81 çулти Леонид Никифоров.

Чупакансен Пĕтĕм Раççейри кунĕ районхулара та иртнĕ. Ку енĕпе Çĕнĕ Шупашкарпа Канаш хулисенче, Сĕнтĕрвăррипе Çĕрпӳ тăрăхĕсенче пурăнакансем уйрăмах хастарлăх кăтартнă, унта 3000-4000 çын старта тухнă.

РАÇÇЕЙРЕ «НАЦИСЕН КРОСНЕ» 2004 ÇУЛТАНПА ЙĔРКЕЛЕÇÇĔ. 2009 ÇУЛТАНПА ĂНА КАШНИ РАЙОНПА ХУЛАРА ИРТТЕРЕÇÇĔ. ÇĔР-ШЫВРИ ЧИ ПЫСĂК ĂМĂРТУРА ВĂЙ ВИÇЕКЕНСЕН ЙЫШĔ ÇУЛТАН ÇУЛ ӲСЕТ. КАЛĂПĂР, ĂМĂРТĂВА 2006 ÇУЛТА – 700 ПИН /86 ХУЛАРА/, 2007 ÇУЛТА МИЛЛИОН ЫТЛА ÇЫН /133 ХУЛАРА/ ХУТШĂННĂ

■ Андрей МИХАЙЛОВ

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26, 28-82-91

### Кăмпи тулăх, уявĕ савăк...



***Шăмăршă районĕнчи Баскак поселокĕнчи чăваш культурин «Пархатар» комплексĕ тĕлĕнмелле хитре вырăнта вырнаçнă. «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕн тата Шăмăршăри тĕп библиотека ĕçченĕсем çак тĕлĕнтермĕш кĕтесре кăмпа фестивальне ирттерчĕç.***

Унта ЧР Наци библиотекин ĕçченĕсем те хутшăнчĕç. Мероприяти хăйне евĕр уяв пек çеç пулмарĕ. Фестиваль вăрман пуянлăхĕпе перекетлĕ усă курмаллине, вăл виçесĕр маррине те тепĕр хут аса илтерчĕ.

Уçланкă варринче «Кăмпа сукмакĕсемпе» литература куравĕ ĕçлерĕ. «Кăмпа» викторина аслисене те, кĕçĕннисене те кăсăклантарчĕ. Унта пурте хаваспах хутшăнчĕç. Тĕрĕс кашни хуравшăн пылак парнепе хавхалантарчĕç. Фестивале хутшăнакансем кăмпаран хатĕрленĕ çимĕçсене те тутанчĕç. Вăл е ку апата мĕнле хатĕрлемеллине ыйтса пĕлчĕç, çĕнĕ рецептсемпе паллашрĕç.

Кĕркунне – кăмпа пухмалли вăхăт. Çак ĕçĕн те хăйĕн вăрттăнлăхĕсем пур. Хастар кăмпаçăсем вăрман çимĕçне тĕрĕс пухмалли меслетсем çинчен каласа кăтартрĕç. Пуçласа кăмпана каяс текенсемшĕн питех те усăллă пулчĕç çав сĕнӳсем.

Фестивале «Кăмпа хичĕ» концерт пуянлатрĕ. Юлашкинчен «Чăваш вăрманĕн» ĕçченĕсем «Аваллăх алăкне уçса» этнографи сукмакĕпе çул çӳреве илсе кайрĕç.

**И.СЕРГЕЕВА.**

### Ах, пукане, пукане...



***Çĕнĕ Шупашкарти ачасен искусство шкулĕнче Ирина Агеева сăрă ăстин куравĕ уçăлнă. Экспозицире – татăкран тата пусмаран ăсталанă 70 ытла пукане. Выставкăра Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчи теттесемпе паллашма пулать. Мĕнле йышши кăна çук-ши кунта? "Куватка", "покосница", "барыня", "младенчик", "неразлучники" тата ытти те...***

Ирина Агеева – Раççей Художникĕсен союзĕн тата Пĕтĕм тĕнчери художниксен союзĕн членĕ, Пĕтĕм тĕнчери тата Раççейри конкурссен лауреачĕ. Халăх пуканипе вăл 25 çула яхăн ĕçлет. Унăн кашни ĕçĕ хăйне евĕр. Сăмахран, "Тульская колыбельная" патак çинче тытăнса тăрать. Ирина Владимировнăн пур пукани те хĕрарăм шăпипе, унăн тĕп тивĕçĕпе – йăха малалла тăсассипе, ачасене воспитани парассипе çыхăннă. Вĕсем тăрăх пурнăç "çиппи" пуканелле вылякан хĕр ачаран пуçласа качча каяс пике, хĕрарăм, асанне-кукамай таран тăсăлнине сăнама пулать. Ав мăнукĕ те –хĕр пĕрчи – пуканелле вылять. Пурнăçра йăлт каялла çаврăнса çитет. Ирина Агеевăн ăсталăхĕпе çамрăксене ӳнер уйрăмĕн преподавателĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧР Художниксен союзĕн членĕ Татьяна Шаркова паллаштарнă. Вăл çамрăк ăрăва пукане тăвас ăсталăхăн вăрттăнлăхĕсене уçнă, унăн пĕлтерĕшĕ пирки каласа панă.

**А.ГРОМОВА.**

### Гран-при – ентешсенче



***Кострома облаçĕнчи Буе хулинче хăвăрт утас енĕпе çĕр-шыв гран-прине çĕнсе илессишĕн пысăк турнир иртнĕ. Çуллахи сезона вĕçленĕ ăмăртăва Чăваш Ен спортсменĕсем те хутшăннă.***

20 километрлă дистанцире пирĕн ентешсене – Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 8-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакансене – çитекенни пулман. Чи сумлă наградăна спортăн тĕнче класлă мастерĕ Петр Трофимов тивĕçнĕ. Унăн тусĕ Александр Яргунькин финиша иккĕмĕш çитнĕ, Кирилл Фролов виççĕмĕш вырăн йышăннă. Палăртмалла: ку Муркаш каччисен Петр Трофимовпа Александр Яргунькинăн кăçалхи пĕрремĕш çитĕнĕвĕ мар. Пĕри – Раççей кубокĕн çĕнтерӳçи, тепри – çĕр-шыв чемпионĕ (50 км). Кострома облаçĕнче çамрăк спортсменсем те палăрнă. Юниорсен тупăшăвĕнче – Денис Сергеев, хĕрсен ушкăнĕнче Мария Лосинова, Мария Волкова тата Анастасия Чернова медальсем çĕнсе илнĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

ЛАРУ

Шупашкар 2014

# Форума хутшăнакансем валли 15000 калпакпа шарф хатĕрлеççĕ

## Шупашкара 81 регионтан хăнасем килĕç

***Ĕнер Правительство çуртĕнче «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канаш ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Унăн ĕçне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ. Хальхинче унта 4 ыйту пăхса тухрĕç.***

Спорт форумне хутшăнакансем валли культура мероприятийĕсемпе экскурсисем йĕркелесси пирки культура министрĕ Вадим Ефимов пĕлтерчĕ. Режиссерсен ятарлă ушкăнне йĕркеленĕ, пултарулăх ушкăнĕсене палăртнă, сценарисене хатĕрленĕ. «Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре хула çыннисем валли «Спорт – пурин валли те» уяв иртĕ. Унта спортсменсем, артистсем, чи лайăх пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен юрри-ташшипе, ăсталăхĕпе паллаштарĕç. Юпа уйăхĕн 8-11-мĕшĕсенче Спорт форумне хутшăнакансем валли театрсенче, концерт залĕсенче тӳлевсĕрех спектакльсем, концертсем кăтартĕç, музейсене те тӳлевсĕрех йышăнĕç. Çакна та палăртмалла: мероприятисене пысăк опыт пухнă артистсене кăна мар, çамрăк талантсене те явăçтаратпăр. Хатĕрленӳ ĕçĕсем аван пыраççĕ, йăлтах çӳллĕ шайра иртессе шанатпăр»,– терĕ Вадим Петрович.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков Пĕтĕм Раççейри ГТО нормативĕсене йышăнмалли Пĕрлехи куна йĕркелесси пирки каласа пачĕ. Алексей Олегович пĕлтернĕ тăрăх – тĕп ăмăртусем Шупашкарти «Энергия», «Труд» стадионсенче тата Юрă уйĕнче иртĕç. Авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче хулари предприятисемпе организацисенче ăмăртусем пуçланаççĕ ĕнтĕ. Унта çĕнтернисем /кашни командăра 10 çын/ финалта вăй виçĕç. Юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче кашни шкултах ГТО нормативĕсене пурнăçлас енĕпе ăмăртусем йĕркелĕç. Вĕсене республикăри спорт федерацийĕсен хастарĕсем хутшăнĕç. «Химиксен хулинче авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче кашни шкулта ГТО нормативĕсемпе ăмăртусем пулнă. Вĕсене Ашшĕсен канашĕсен членĕсем те хутшăннă. Çитес шăмат кун вĕрентекенсен хушшинче ăмăртусем пулĕç. Учительсем унта пĕрешкел тумпа тухма палăртаççĕ. Хальлĕхе хулара пин çын пĕрешкел футболкăсем туяннă»,– пĕлтерчĕ Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Марина Соловьева. Шупашкар хула администрацийĕ вара Спорт форумне хутшăнакансем валли 15000 калпакпа шарф хатĕрлĕ.

«Мĕн пур мероприятин Раççей тата Чăваш Ен Гимнĕсем янăранинчен пуçланмалла. Шупашкарти ялавсене пурне те улăштармалла»,– сĕнчĕ Михаил Игнатьев. Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хутшăнакансен тата хăнасен апатланăвне йĕркелес ыйту çинче чарăнчĕ. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта куллен 4450 çынна апатлантарма тивĕ. Паянхи кун тĕлне – меню та, график та хатĕр. Поварсемпе официантсем ятарлă, пĕрешкел, чăваш паллипе пуянлатнă тум тăхăнĕç. Вĕсем валли ятарлă семинарсем те йĕркеленĕ. Хусантан специалистсене те чĕнсе илнĕ. «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум хăнисемпе официаллă делегацисен çулне ятарлă çынсене çирĕплетесси пирки те сăмах пуçарчĕç. ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов пĕлтернĕ тăрăх – республикăн тĕп хулинче Раççей Федерацийĕн 81 регионĕнчен хăнасене йышăнмалла. «Кашни делегаци çумне ятарлă çынсене тата волонтерсене çирĕплетнĕ. Юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче волонтерсем валли тепĕр хут вĕренӳ ĕçне йĕркелеççĕ»,– уçăмлатрĕ Александр Степанович.

Информполитика министрĕ Валентина Андреева пĕлтернĕ тăрăх – паянхи кун тĕлне республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче 9000 ытла материал кун çути курнă. Роликсене çĕнетсех тăраççĕ. Халĕ хăнасем валли Чăваш Республики пирки буклет хатĕрлеççĕ. «Спорт форумĕ вăхăтĕнче журналистсем мĕнле тум тăхăнĕç? – интереслене Михаил Игнатьев. – Журналистсем çĕтĕк джинссемпе ан пулччăр ĕнтĕ. Пĕрешкел тум пулсан аванччĕ, вĕсене Раççей журналисчĕсенчен уйăрма май килтĕрччĕ, чăваш палли пултăрччĕ». Валентина Владимировна пĕлтернĕ тăрăх – массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем кашни хăйсем йышăннă пĕрешкел тумпа пулĕç, чăваш наци палли пирки те манмĕç.

Вице-премьер – строительство министрĕ Олег Марков Спорт форумĕ тĕлне территорисене хăтлăх кӳрес, çул хĕррисенчи объектсене тирпейлес ыйтусем çинче чарăнчĕ. Олег Иванович авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкар – Çĕнĕ Шупашкар çула тĕрĕсленĕ-мĕн. «Сĕнтĕрвăрри çулĕн айккинчи курăка çулмалла. Трактор тăвакансен проспектĕнче машиностроени техникумĕ тĕлĕнче çӳп-çап куписене пĕтермелле. Хăшпĕр чарăну вырăнне, павильона çĕнетмелле. Мĕн пур ĕçе авăн уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле»,– терĕ вăл. Ларура асфальт çулсем çинчи паллăсене çĕнетесси пирки те сăмах пулчĕ. Çав вăхăтрах аэропорт, Çĕнĕ хула территорийĕсене тирпей-илем кĕртмелле, Шупашкар – Çĕнĕ Шупашкар çулĕн айккинчи территорисене йĕркене кĕртесси пирки каларĕç. Форумчен шутлă кунсем кăна юлчĕç, палăртнине йăлтах пурнăçласчĕ. Спорт форумĕ иртнĕ кунсенче ĕçе те спорт тумĕпех каясчĕ.

■ Роза ВЛАСОВА

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил кăнтăртан 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, çĕрле 7 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 45 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 11 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нӳрĕк 48 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 6 минут.**

# Сочири тĕл пулусем

## Инвестицисене – симĕс çутă

***Авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Сочире иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери XIII инвестици форумĕн "Раççей Европăпа Ази хушшинче: паянхи условисенчи çĕнĕ регион политики" темăпа йĕркеленĕ пĕрлехи ларăвне хутшăннă.***



**● М.Игнатьев, С.Аксенов: «Пĕрле килĕштерсе ĕçлĕпĕр».**

cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

### Чăваш Ен проекчĕ – чи лайăххи

Форума пухăннисен умĕнче РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев тухса калаçнă. Вăл Раççейĕн экономикăпа политика лару-тăрăвĕнчи пысăк улшăнусене палăртнă. Стратеги шайĕнчи ĕçтешсем улшăнаççĕ, çĕнĕ рыноксем йĕркеленеççĕ. Азири çĕр-шывсемпе – Китайпа, Японипе, Индипе – тытакан хутшăнусем çирĕпленеççĕ. Çак лару-тăрура хамăр çĕр-шыв бизнесĕ тĕп тĕрев пулса тăмалла.

Чăваш Ене илес тĕк – республика хамăрăн ял хуçалăх производствине пулăшас тата аталантарас, импорта хамăрăн продукципе улăштарас енĕпе çине тăрса ĕçлет. Чăваш Ен Китайпа пĕрлехи проектсене пурнăçлать. Вĕсенчен пĕри, республикăн апат-çимĕçпе çыхăннă хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕллевлĕскер, агропарк строительстви. Нумаях пулмасть ют çĕр-шыв инвестицийĕсене пулăшмалли саккун проектне йышăннă, вăл чикĕ леш енчи компанисене хăйсен çĕнĕ проекчĕсене Чăваш Енре пурнăçлама май парĕ.

Лару хыççăн "Обязательствăсене мĕнле пурнăçламалла, ăнăçу мĕнле тумалла" темăпа дискусси пулнă, ăна Раççей Правительствин вице-премьерĕ Ольга Голодец ирттернĕ. Социаллă сфера аталанăвĕн малашлăхне сӳтсе явнă. Калаçăва хутшăннисем Раççейĕн социаллă тытăмне йĕркелес ĕçе пысăк тӳпе хывнă Александр Починок опытне аса илнĕ. Пĕтĕм Раççейри регионсен социаллă аталанăвĕн программин конкурсĕн кăтартăвĕсем тăрăх паракан премие шăпах унăн ячĕллĕ.

Чăваш Ен çак конкурса "Лекотека – вăйă территорийĕ" проектпа хутшăннă. Ку – аталану енĕпе чăрмавсем пур ачаллă çемьесене психологипе педагогика енĕпе пулăшмалли тытăм. Ольга Голодец пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикин проекчĕ "Çынлăх" номинацире чи лайăххи тесе йышăннă, ЧР Пуçлăхне Михаил Игнатьева çĕнтерӳçĕ дипломне панă.

Асăннă проекта 2012 çулхи авăн уйăхĕнче пурнăçлама тытăннă, икĕ хут тăснă, халĕ вăл яланхи йĕркепе ĕçлет. Çак тапхăрта проекта 800 ытла ачана явăçтарнă, 700 ытла ашшĕ-амăшне вĕрентнĕ.

### Банкпа алла-аллăн

Çав кунах Пĕтĕм тĕнчери "Сочи-2014" инвестици форумĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Раççей Перекет банкĕн правленийĕн председателĕ, президенчĕ Герман Греф банкпа республика тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă.

Документра палăртнă тăрăх – Перекет банкĕ Чăваш Еншĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕсене, пурăнмалли çурт-йĕр тумалли программăсене хутшăнĕ, индустрипе инноваци инфратытăмне, агропромышленноç комплексне, энергетикăна, çыхăнупа телекоммуникаци тытăмĕсене, транспорта аталантарма тĕрев парĕ. Чăваш Ен территорийĕнче наукăпа тачă çыхăннă, пысăк технологисене тĕпе хуракан инвестици проекчĕсене пурнăçлама палăртнă.

Килĕшĕве алă пуснă хыççăн журналистсем унăн усси пирки ыйтнине хуравласа Герман Греф Чăваш Ен кризис тапхăрĕнче ипотекăна субсидилемелли опытпа усă курнă пирвайхи регионсенчен пĕри пулнине аса илтернĕ: "Çак опыт хăйне тӳрре кăларчĕ, эпир федерацин мĕн пур субъекчĕпе çавнашкал килĕшӳсем тума пуçларăмăр. Çавна май çурт-йĕр туянассин тытăмĕнче ипотека тӳпи 10-11-тен 30-35% таран ӳсрĕ. Перекет банкĕ Чăваш Ен Правительствипе нумай çул çыхăну тытса тухăçлă ĕçлет, çак килĕшӳ регион аталанăвне пулăшасси пирки иккĕленместĕп".

ОЛЬГА ГОЛОДЕЦ ПĔЛТЕРНĔ ТĂРĂХ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОЕКЧĔ "ÇЫНЛĂХ" НОМИНАЦИРЕ ЧИ ЛАЙĂХХИ ТЕСЕ ЙЫШĂННĂ, ЧР ПУÇЛĂХНЕ МИХАИЛ ИГНАТЬЕВА ÇĔНТЕРӲÇĔ ДИПЛОМНЕ ПАНĂ

"Кунашкал килĕшӳсем бизнес аталанăвне тĕревлеççĕ, Перекет банкĕн клиенчĕсене ыранхи куна шанма май параççĕ. Экономикăн чăн секторĕн аталанăвĕ пирки чылай калаçатпăр. Чăваш Енре Перекет банкĕн кредит портфелĕнчи 60,2 млрд тенкĕрен 50 млрд тенки – шăпах экономикăн чăн секторĕн тӳпи, ытти – потребительсен рынокĕн пайĕ", – тенĕ Михаил Игнатьев. Вăл Перекет банкĕн ертӳçине Чăваш Енпе килĕштерсе ĕçленĕшĕн, ял çыннисене банкăн паха пулăшу ĕçĕсемпе усă курма май паракан мобильнăй банксемшĕн тав тунă.

Ипотека кредичĕсен процент виçине субсидиленине кура Чăваш Енре çак пулăшу ĕçĕсемпе усă куракансен шучĕ палăрмаллах пысăкланнă. 2011 çулта пĕтĕмпе 4,8 млрд тенкĕлĕх 5,9 пин ытла ипотека кредичĕ панă. 2013 çулта вĕсен шучĕ 9,1 пинрен иртнĕ – 10,4 млрд тенкĕлĕх. 2014 çулта та ӳсĕм палăрать.

"Чăваш Енре пурăнакансем ипотека кредичĕсене шанасси çирĕпленчĕ. Патшалăх 4% чухлĕ субсиди пани ипотека кредичĕн потребительсен рынокĕнчи хакне чакарать, çамрăк, пĕчĕк тупăшлă çемьесене хăйсен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатма май парать", – пĕтĕмлетнĕ республика Пуçлăхĕ.

### Инçетри Севастополь çывăхланчĕ

Сочири инвестици форумĕн пирвайхи кунĕ Чăваш Ен делегацийĕшĕн чăннипех тухăçлă пулнă. Раççейĕн виçĕ регионĕпе – Севастополь хулипе, Ставрополь крайĕпе, Ямал-Ненец автономи округĕпе – тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшӳсене алă пуснă. Вĕсен тексчĕсем пĕрешкел теме те юрать – енсем экономика, социаллă пурнăçпа культура çыхăнăвĕсене аталантарма хатĕррине çирĕплетеççĕ. Çав вăхăтрах кашни регион хăйĕншĕн пĕлтерĕшлĕ самантсене те палăртнă.

Севастополь хулин кĕпĕрнаттăрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан, хула правительствин председателĕ Сергей Меняйло палăртнă тăрăх – вырăс морякĕсен мăнаçлăхĕ шутланакан Севастополь Раççейĕн мĕн пур регионне çыхăнтарса тăрать. "Кунта мĕн пур халăх çыннисем, çав шутра Чăваш Ен представителĕсем служба тивĕçĕсене чыслăн пурнăçланă, пурнăçлаççĕ тата пурнăçлĕç. Севастопольте туслăха, пĕр-пĕрне пулăшассине яланах хакланă, хула çыннисем çакна паян та туяççĕ", – тенĕ вăл.

Ставрополь крайĕн кĕпĕрнаттăрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Владимиров ял хуçалăхĕ енĕпе çыхăнăва çирĕплетмелли, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашмалли çинчен каланă.

Ямал-Ненец автономи округĕн кĕпĕрнаттăрĕпе Дмитрий Кобылкинпа Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пенсие тухнă, пурăнмалли вырăна улăштарас кăмăллă граждансене куçармалли программăна пурнăçлас енĕпе çыхăну тытса ĕçлессине сӳтсе явнă. Унашкаллисен йышĕнче Чăваш Енре çуралнисем те нумай. Унсăр пуçне республикăри электротехника кластерĕн предприятийĕсем нефтяниксемпе газовиксене пĕчĕк вольтлă аппаратурăпа, РЗА хатĕрĕсемпе, ытти электротехникăпа тивĕçтереççĕ.

Килĕшӳсене алă пуснисем регионсен тачă çыхăну тытса ĕçлемелли майсем анлине палăртнă.

Тепĕр кунне Михаил Игнатьев тата РФ промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Денис Мантуров ЧР Министрсен Кабинечĕ тата асăннă министерство тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă. "Килĕшӳ пирĕн министерствăна тата Чăваш Ене çĕнĕ индустрисене аталантарас, пысăк технологисене тĕпе хуракан производствăсем, çĕнĕ пердприятисене укçа хывакан инвесторсене хавхалантаракан механизмсем йĕркелес енĕпе пулăшасса шанатпăр", – тенĕ Денис Мантуров.

Çав кунах тепĕр килĕшӳ те çуралнă – ăна Крым Республикин пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Аксеновпа алă пуснă. Документ Чăваш Ен тата Крым правительствисем суту-илӳпе экономика, наукăпа техника, социаллă пурнăçпа культура енĕпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетет. Сергей Аксенов Чăваш Ен халăхне Крыма куçăм тапхăрĕнче тĕрев панăшăн тав тунă. Документа алă пуснă хыççăн регионсен пуçлăхĕсем пĕр-пĕрне парнесем панă.

### Рейтинг – чăн хаклав

"Сочи-2014" форум программипе килĕшӳллĕн шăмат кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Раççейри ЖКХ" уйрăм çынсем инвестици хывмалли çĕнĕ условисем" дискуссие хутшăннă. ЖКХна çĕнетмелли инвестицисене сӳтсе явма Раççей Правительствин вице-премьерĕ Дмитрий Козак, строительствăпа ЖКХ министрĕ Михаил Мень хутшăннă.

Тĕл пулура палăртнă тăрăх – çĕр-шывра çак отрасльте шанчăклă та тупăшлă бизнес тытса пымалли нормăпа право никĕсне йĕркеленĕ. Кăçалхи 9 уйăхра ЖКХ сферине 330 млрд тенкĕ ытла инвестици хывнă. 2014 çулта ăшăпа, электричествăпа, шывпа тивĕçтерес енĕпе 31 концесси килĕшĕвне алă пуснă.

Дмитрий Козак отрасле уйрăм çынсен инвестицийĕсене явăçтарма Правительство пысăк пĕлтерĕшлĕ йышăнусем хатĕрлени çинчен пĕлтернĕ, вĕсем тавлашма пăрахса регионсен тата муниципалитетсен шайĕнче чăн ĕçе кӳлĕнмешкĕн май параççĕ. "Тухăçсăр пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă предприятисен пурлăхне концессие памалли графиксене пурнăçламалла", – татăклăн каланă вăл.

Çав кунах Михаил Игнатьев рейтинг комитечĕн усă ларăвĕнче пулнă, унта РФ субъекчĕсенчи инвестици климачĕн наци рейтингĕн пилот тапхăрне пĕтĕмлетнĕ. Ларăва Стратеги пуçарăвĕсен агентствин эксперчĕсем, Раççей регионĕсен ертӳçисем, бизнесменсем хутшăннă, Мускаври "Сколково" шкул ректорĕ Андрей Шаронов ертсе пынă.

Рейтингăн пилот тапхăрне федерацин 21 субъекчĕ хутшăннине палăртнă. Рейтингра – 54 кăтарту. Регионсене вĕсем тăрăх хакланă. Андрей Шаронов рейтингăн регионсенчи чăн лару-тăрăва кăтартмаллине, вăл субъектсен инвестици илĕртӳлĕхне лайăхлатмалли тухăçлă инструмент пулса тăмаллине палăртнă.

Сăмах илнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ çак рейтинг федераци субъекчĕсене хăйсен вăйлă та хавшак енĕсене объективлă хаклама пулăшни çинчен каланă. "Чăваш Енĕн çут çанталăкăн пысăк ресурсĕсем çук. Тĕп вырăнта – çынсем, ăс-хакăл капиталĕ. Çавăнпа инвестицисене çыншăн хыватпăр", – тенĕ вăл.

Бизнеса ура хуракан административлă чăрмавсем пирки сăмах пуçарнă май Михаил Васильевич предпринимательсем ирĕк паракан документсем илес енĕпе йывăрлăх пурришĕн кăмăлсăрланни пирки каланă. "Çак тытăм туллин йĕркеленмен. Хăш-пĕр полномочие регионсен шайне хăюллăнах пама пулать", – тенĕ вăл Чăваш Ен инвестици климачĕн наци рейтингне хутшăнма хатĕррине палăртса.

### "Хĕвел" тата ыттисем

Протоколпа пăхнă мероприятисемсĕр пуçне Михаил Игнатьев Сочире РФ Правительствин членĕсемпе тĕл пулусем ирттернĕ, республикăна пырса тивекен ыйтусене сӳтсе явнă.

Энергетика министрĕпе Александр Новакпа курнăçнă май Çĕнĕ Шупашкарти "Хĕвел" ОООра хĕвел модулĕсен производстви пирки калаçнă. Çавăн пекех электротехника промышленноçĕн аталанăвĕ пирки сăмах пуçарнă. ЧР Пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх – импорта хамăрăн продукципе улăштармалли политикăна тĕпе хунă май Шупашкарти предприятисем потребительсене паха электротехника продукцийĕпе тивĕçтерме хатĕр, вăл чикĕ леш енчи тĕнчипе паллă компанисен таварĕсемпе те тупăшма пултарать. Александр Новак çывăх вăхăтра Чăваш Ене килме шантарнă.

Михаил Игнатьев строительство министрне Михаил Мене республикăра граждансене юхăннă çуртсенчен куçармалли программăна мĕнле пурнăçлани çинчен каласа панă. Пĕрремĕш тапхăрта Чăваш Ен хăйĕн обязательствисене туллин пурнăçланă, ку енĕпе Раççейĕн чи лайăх регионĕсен шутне кĕнĕ. Иккĕмĕш тапхăрта аукционсем ирттернĕ, подряд организацийĕсемпе контрактсем тунă, çурт-йĕр çĕклеççĕ. Тĕслĕхрен, авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче Канашра кивĕ çуртсенчен куçарнисене 65 хватерлĕ çĕнĕ çурта кĕме уçăсем панă. 2015 çул валли укçа палăртса хунă. Михаил Васильевич çавăн пекех нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсанипе паллаштарнă, халĕ капиталлă юсав фондне йĕркелемелли процесс вĕçленсе пыни çинчен пĕлтернĕ.

Республика çавăн пекех федерацин "Раççей çемйи валли – çурт-йĕр" программине пурнăçлама хастар хутшăнать. Унпа килĕшӳллĕн строительсене инженери инфратытăмне тума эконом-класс йышши çурт-йĕрĕн кашни тăваткал метрĕшĕн 4 пин тенкĕ компенсаци тӳлеççĕ. Çак программăпа Шупашкарти "Гремячево" микрорайонта çурт-йĕр çĕклеме палăртнă.

Транспорт министрĕпе Максим Соколовпа Михаил Игнатьев çул-йĕр аталанăвĕн ыйтăвĕсене, федерацин М-7 трассине реконструкцилессине сӳтсе явнă. Максим Соколов 2018 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне федерацин республика территорийĕнчи пĕтĕм çулĕ 1В категорие тивĕçтерессине çирĕплетнĕ. Çавăн пекех 2016 çулта Сăр урлă тепĕр кĕпер хывма пуçлассине шантарнă, Шупашкарти Мускав кĕперĕн строительствипе реконструкцийĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

■ **Д.ВАСИЛЬЕВ**

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Журналистсем çивĕч ыйтусене çĕклерĕç

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ-ял хуçалăх тата информаци политикипе массăллă коммуникаци министрĕсем Сергей Павловпа Валентина Андреева эрне кун Вăрнарти типĕтнĕ сĕт заводĕнче республикăн, районсен информацин йышлă хатĕрĕн аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен журналисчĕсемпе тĕл пулчĕç. "Агропромышленноç умĕнчи чăрмавсемпе халăха паллаштарас ĕçри паха опыт" темăпа семинар-канашлу ирттерчĕç.***

С.Павлов вырмана пĕтĕмлетрĕ. "Кăçал тĕш тырă тата пăрçа йышши культурăсем акмалли тĕллеве пурнăçларăмăр, – терĕ вăл. – Вĕсене 500 пин тонна туса илме палăртнăччĕ. Комбайнпа çапса тĕшĕленĕ куккурус 20 тоннăран сахал мар пуçтарăнасса шанатпăр. Ампар виçипе кĕлете 520-530 пин тоннăран кая мар кĕрĕ. Пӳлмене хывмалли тĕллев ăнăçлă пурнăçланĕ. Вăрнарсем тĕш тырă чылайранпах кашни гектартан вăтамран 27,3 центнер илменччĕ. Шупашкар районĕнче – 25,7, Çĕрпӳ районĕнче 22,9 центнер тухрĕ".

Авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне бункер виçипе 565443 тонна тырă кĕртнĕ. Ял ĕçченĕсем типĕ кунсенче çĕр улмине пухса илессишĕн тăрăшаççĕ. Ăна мĕн пур лаптăкăн 90,7% кăларнă. Тухăçĕ кашни гектартан вăтамран 157 центнер. "Хуçалăхсем çумăр çу каçиччен пилĕк-ултă хутран сахал мар çунă çулсенче 190-шар центнертан кая мар пухса кĕртнĕ, – терĕ министр. – Çу уйăхĕнче çанталăк шăрăх тăнăран тухăç пĕчĕкрех. 633 пин тонна çĕр улми туса илме ĕмĕт тытнăччĕ. Кăшт сахалрах тухма пултарать".

2014 çулхи кăрлач-çурла уйăхĕсенче мăйракаллă шултра выльăх, кайăк-кĕшĕк ашĕ /чĕрĕ виçепе/ пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 4,2% нумайрах туса илнĕ. Çак ӳсĕме хресчен-фермер хуçалăхĕсемпе килти хуçалăхсем мар, "Ачаковское" обществăн Шупашкар районĕнчи Çĕнĕ Тутаркасси ялĕнчи чăх-чĕп фабрики, "Чăваш бройлерĕ" АУО, "Юрма" агрофирма ытларах тӳпе хывнă. "Çитес çулсенче какай туса илессипе производствăна ӳстерес шанăç пур, – палăртрĕ С.Павлов. – Мĕншĕн тесен "Ачаковское" тата "Юрма" аш ытларах хатĕрлеме палăртрĕç. Вĕсем инвестици хывса фабрикăсене модернизацилеççĕ".

Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсенче 8 уйăхра иртнĕ çулхи асăннă тапхăрти чухлех, вăл шутра ял хуçалăх организацийĕсем – 3,4%, ХФХсем 20% нумайрах сĕт сунă. Вице-премьер ку енĕпе малашне ял хуçалăх организацийĕсене çирĕп шаннине пытармарĕ. Килти хуçалăхсене те пысăк пулăшу кӳрессине палăртрĕ. Сăмахран, кăçал вĕсене панă кредитăн % пайне банка тавăрма федераци хыснинчен 540 млн тенкĕ уйăрнине, çемьесем унпа тĕллевлĕн усă курнине лайăхрах тĕрĕсленине пĕлтерчĕ. Хăш-пĕр килти хуçалăх саккуна пăхăнмасть. Нумаях пулмасть çавнашкал тĕслĕхе Йĕпреç районĕнче тăрă шыв çине кăларнă. Фермер патшалăхран субсиди илнĕ пулин те ĕç пуçламан. Халĕ унран укçа шыраттараççĕ.

"Кăçал мĕн пур программăпа килĕшӳллĕн федераци бюджетĕнчен 2 млрд та 230 млн тенкĕ куçарасса кĕтетпĕр, – терĕ Сергей Владимирович. – Çакăнтан ытларах килме пултарать. Темиçе программăпа кĕмĕл хушса парас шанăç пур".

"Хыпар" журналисчĕн ыйтăвне вице-премьер çапла хуравларĕ: "Министерство АПКри инвестици тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме Раççей Ял хуçалăх министерствине 284 проект тăратрĕ. Унăн ĕç ушкăнĕ 21-шне суйласа илнĕ. Çывăх вăхăтра вĕсене министерство комиссийĕ тишкерĕ. Пурне те пурнăçа кĕртме çирĕплетессе шанатăп. Агропромри ертӳçĕсене çакна пĕлтеретĕп: кăçалтан Раççей Ял хуçалăх министерстви техника хатĕрĕ туянмашкăн субсиди уйăрас ыйтăва татса пама инвестици проекчĕ йышăнмасть. Выльăх фермисем хăпартма çеç нухрат парĕç. Ашпа сĕте тирпейлекен предприятисене модернизацилемешкĕн субсидин % виçине саплаштарма ӳлĕм те республика хыснинчен кĕмĕл куçарĕç".

Вице-премьер ытларах Çĕнĕ Шупашкарсене пырса тивекен ырă хыпар пĕлтерчĕ: "Агроинвест" общество хулари макарон туса кăларакан фабрикăна хута ярасшăн. Унта ĕçлеме çынсем кирлĕ пулĕç. Европăран çĕр-шыва апат-çимĕçĕн темиçе тĕсне кӳме чарнăран Раççей Правительстви мăйракаллă шултра выльăх ашĕ нумайрах туса илме палăртнă. Фермăсем çĕклеме, ăратлă выльăх туянма федераци хыснинчен субсиди уйăрĕç. "Хальлĕхе республикăра аш нумайрах туса илес тĕллевпе мăйракаллă шултра выльăхăн герефорд е ытти ăратне усракан хуçалăх сахал, – терĕ вице-премьер. – Какая ăсатмалли выльăх ăрачĕ 2 пин пуçран ытла мар. Пирĕн аграрисем ăна çитĕнтерес енĕпе питех ĕçлесшĕн мар. Сăлтавне ĕне выльăх какайĕ паракан тупăш хуçалăх кассине вăрах пырса кĕнипе ăнлантараççĕ. Федераци хыснинчен фермăсем тума субсиди панине кура ӳлĕм кĕтӳ пысăкланатех. Сăмахран, Улатăр районĕнче аш туса илмелли ăратлă выльăх усрама тĕллев лартасшăн. Китай инвесторĕсем Сĕнтĕрвăрри районĕнче выльăх комплексĕ тăвасса кĕтетпĕр. Çитес уйăхăн 2-мĕшĕнче вĕсемпе Шупашкарта тĕл пулса ыйтăва каллех сӳтсе явăпăр".

Чăваш Енре сăвакан сĕтĕн çуррине республика тулашне турттараççĕ, хамăрăн тирпейлекен предприятисене чĕр таварсăр хăварса йывăрлăха кĕртеççĕ. Унта турттаракансенчен хăшĕ-пĕрин транспортпа пĕрле илсе çӳремелли ветеринари документчĕ те çук. "Эпĕ ветслужбăран çавнашкал продукцие тытса чарса утилизации ăсатма ыйтрăм, – сассине хăпартрĕ вице-премьер. – Темиçе тонна сĕте пăрахăçласан, тен, юта турттарма чарăнĕç? Теприсем республика чиккинче ветслужба е ПАИ инспекторĕсем тăнине çула тухиччен пĕлеççĕ. Çул-йĕре пăхса тăракан тытăмран вĕсене вăрттăн систереççĕ тесе шухăшлатпăр".

С.Павлов кăçал ял хуçалăхĕнче тар тăкакансен ĕç укçи вăтамран 18-20% ӳсессе шантарчĕ. Аса илтерĕтĕп: халĕччен вĕсене пама уйăхсерен 12200 тенкĕ шутланă. Кăçалхи 8 уйăхра ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 8 пине яхăн гектар парлак çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Иртнĕ çулсенче усă курманнине сухалас тĕлĕшпе ĕç пырать. Анчах хыт хура пуснă çĕнĕ вырăнсене шута илеççĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи "Гвардеец" хуçалăх кăçал пĕр гектар та акса хăварман. Унăн çĕрне урăх хуçана тара пама тупăш илекен предприяти шыраççĕ.

Ял хуçалăх организацийĕсен 82% тупăшлă ĕçлени АПКра лару-тăру лайăхланнине çирĕплетет. Пысăк предприятисем ял хуçалăх культурисем ытларах та ытларах çитĕнтереççĕ. Тĕслĕхрен, Йĕпреçри "Молочная империя" кооператив халăхран сĕт пухнипе пĕрлех малтан Киров, Ильич ячĕллĕ хуçалăхсем сухаланă çĕре пусă çаврăнăшне кĕртнĕ.

Завод ĕç-хĕлĕпе цехсенче çӳресе паллашнă журналистсем предприятие ялсенчен турттаракан чĕр тавар пахалăхĕпе кăсăкланчĕç. "Сĕт паракансем унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн тăрăшни сисĕнет, – хуравларĕ обществăн генеральнăй директорĕ Федор Волков. – Ветнадзор пирĕн пата килсе час-часах тĕрĕслет. Продукци пухакан кооперативсем, уйрăм предпринимательсем, мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсем пире паха сĕт сутасса кĕтетпĕр. Унта темле хутăш ярса сĕт ытларах сутассишĕн улталама ан тăрăшăр".

Журналистсем ЧР аграрийĕсен апат-çимĕçне федерацин республикăри супермаркечĕсенче çителĕксĕр йышăнни пирки те сăмах хускатрĕç. "Юлашки вăхăтра çак сетьсенче вырăнти продукцие ытларах туянни палăрать", – хак пачĕ С.Павлов. Сĕт юр-варне вĕсене вырнаçтарма килĕшӳсем çирĕплетнине Ф.Волков та çирĕплетрĕ.

Информаци политикипе массăллă коммуникаци министрĕ В.Андреева семинар-канашлăва пĕтĕмлетсе АПКна тӳпе хывакан журналистсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Паха продукци туса кăларса çĕр-шывĕпех палăрнă предприятисен йышĕ ӳснĕшĕн савăннине, Чăваш Енри информацин йышлă хатĕрĕ вĕсен ĕçне пур енлĕн çутатнине палăртрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

# Садиксем, çулсем...

***Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федерацин ĕç тăвакан влаç органĕсен, хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Малтанах Михаил Васильевич ял тăрăхĕсен тин суйланнă пуçлăхĕсене саламланă, ĕç тăвакан влаç органĕсен, информаци ушкăнĕсен ертӳçисене вĕсене ĕçре методика енĕпе пулăшса пыма сĕннĕ.

Вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов шкулчченхи вĕрентӳ объекчĕсен строительствипе паллаштарнă. 2011-2013 çулсенче Чăваш Енре 23 ача сачĕ тунă е реконструкциленĕ – пĕтĕмпе 3870 ачана йышăнмалăх. Çак тĕллевпе 1,6 млрд тенкĕ ытла уйăрнă. Авăн уйăхĕн 17-мĕшĕ тĕлне ача садне йышăнмалли черетре çулталăк çурăран аслăрах 13,7 пин ача пулнă, 570 ача – 3 çултан аслăраххисем. Шупашкар, Канаш хулисенче, Шупашкар, Вăрнар, Красноармейски, Муркаш, Улатăр, Вăрмар, Комсомольски тата Куславкка районĕсенче кулленхи черетсем пур-ха.

Кăçал шкулчченхи вĕрентĕвĕн 2616 вырăнлăх 14 учреждениене хута яма палăртнă. Çĕрпӳ районĕнче 240 ачана йышăнакан садик алăкĕсене уçнă. Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Вăрмар, Етĕрне тата Тăвай районĕсенче садиксен строительстви графикпа килĕшӳллĕн пырать. Шупашкар хулинче, Канаш районĕнчи Шăхасанта, Улатăр районĕнчи Чуварлейре графикран юлнă. Вăрнарта та ача садне каярах юлса хута ярĕç, Кӳкеçре тата Муркашра çакнашкал объектсен строительстви тĕлĕшпе çивĕчлĕх пур.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ ача сачĕсен строительствипе реконструкцийĕн проект документацине кирлĕ пек хатĕрлемен организацисен ĕçне çивĕч критикленĕ. Унашкал подряд организацийĕсене лицензисĕр хăварма пĕрре кăна мар сĕннине аса илтернĕ.

Ача прависем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăй Вячеслав Рафинов тата Владимир Иванов министр Комсомольскинчи 1-мĕш шкулти пăтăрмах тĕлĕшпе йышăннă мерăсем çинчен пĕлтернĕ. Унта пуçламăш классен вĕрентекенĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Республика Пуçлăхĕ çак пăтăрмах сăлтавĕсене педагогсен тата попечительсен канашĕсенче ашшĕ-амăшне явăçтарса тишкерме чĕнсе каланă.

Автомобиль çулĕсене юсасси, картишсене тирпейлесси мĕнле пыни çинчен транспорт министрĕ Владимир Филиппов каласа панă. Кăçал çул-йĕрпе çыхăннă ĕç-хĕл валли 2461,6 млн тенкĕ уйăрма палăртнă, çав шутра 2090,1 млн – ЧР Çул-йĕр фондĕнчен. Муниципалитетсен бюджечĕсен тӳпи – 15%. Сакăр уйăхра 99,34 км автомобиль çулĕсене, 130 картиш территорийĕсене, унта пыракан çулсене юсанă – пĕтĕмпе 60,6 пин тăваткал метр ытла. Вăрмар районĕнче, Етĕрне хулин урамĕсенче çулсене хута янă. Регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ 38 км ытла çула юсанă, çак ĕçсене чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне туллин вĕçлемелле.

«Пĕтĕм ĕçе пысăк пахалăхпа пурнăçламалла. Çитменлĕхсене строительсен, подрядчиксен хăйсен шучĕпе пĕтермелле. Материалсен пахалăхне тĕрĕслĕр – пĕтĕмпех проектпа смета документацине тивĕçтермелле», – асăрхаттарнă Михаил Игнатьев.

■ **К.АНДРЕЕВ**




*Ятарлӑ кӑларӑм*

# КУЛЬТУРА



ХАЛӐХ ТАЛАНЧĔ

## Пĕчĕкрен суйласа илнĕ çулпа...

### Шкулта вĕреннĕ чухнех юрра-ташша ӑста пулнӑ вӑл. Ачалӑхри киленĕç каярахпа пурнӑç тĕллевĕ пулса тӑнӑ

***Анатолий Юдин пурнӑçне юрӑ-кĕвĕпе çыхӑнтарнӑ. Вӑрнар районĕнче пурӑнакансем çеç мар, республикӑн тĕрлĕ кĕтесĕнче çуралса ӳснĕ çамрӑксем те ун патĕнче вĕреннĕ. Анатолий Иванович хальхи вӑхӑтра Вӑрнар поселокĕнче пурӑнать. Унӑн ӑсталӑхĕ пирки тахçанах илтнĕ, сцена çинче темиçе те курнӑ. Хамӑн çавнашкал пултарулӑх çукран ун çине кашнинчех ӑмсанса пӑхнӑ. Музыкӑна чунтан юратакан, юрӑ-кĕвĕ вӑрттӑнлӑхĕсене пĕлекен çынпа курса калаçма питĕ кӑмӑллӑ пулчĕ.***



"Музыкӑна пĕчĕкрен юратма пуçланӑ. Шкулта пĕрремĕш артист пулнӑ. 7 класс пĕтернĕ хыççӑн юрлама вĕренес тесе Шупашкара çул тытрӑм. Илмерĕç. Манӑн хороведенине каймалла пулнӑ. Йӑнӑш турӑм. Кун пирки вĕрентсе калакан пулман", – аса илет Анатолий Иванович.

Ӑçтан пырать-ха Юдинӑн çак пултарулӑхĕ? "Анне юрлама юратнӑ. Пичче те хитре юрлатчĕ, сасси лайӑхчĕ, – калаçать малалла хастарскер. – Таçтан тупнӑччĕ вӑл хӑлтӑр-халтӑр балалайка. Вырӑн çине урисене тӑратса выртатчĕ те пантӑртаттарма пуçлатчĕ. Пулсах пĕтейместчĕ хӑйĕн. Унтан тарӑхса балалайкӑна перетчĕ. Çӳп шӑтӑкĕ патĕнче выртса çĕр каçатчĕ вара инструмент. Тепĕр кун çĕмрĕкскере юсатчĕ, каллех пантӑртаттарма пуçлатчĕ".

Пĕчĕк Анатолий те балалайка калама вĕренесшĕн пулнӑ. Ĕлкĕреймен: пиччĕшĕ инструмента кӑларса пенĕ. Хут купӑс калама вĕренме хирĕçре пурӑнакан Никантӑр пичи ирĕк паман: çĕмĕрен тесе музыка инструментне тыттарман. "Вӑхӑт çитсен хамах пĕтĕмпех вĕрентĕм. Никам та ӑс паман. Каярахпа хамах купӑс, баян туянтӑм", – тет Анатолий Иванович.

Ачалӑхри киленĕç пурнӑç тĕллевĕ пулса тӑнӑ. А.Юдин И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститутӑн музыка факультетĕнче аслӑ пĕлӳ илнĕ. "Хормейстера вĕрентĕм. Питĕ ӑста педагогсем пулнӑ манӑн: В.Ходяшев, Т.Фандеев... – сӑмахне тӑсать вӑл. – Çĕмĕрлене ĕçлеме ячĕç. Кашни класра хĕрĕхшер ача. "Ой-ой!" – терĕм те Вӑрнара тарса килтĕм. Петĕр Ялкир районӑн кивĕ культура çуртне хормейстера йышӑнчĕ. Çамрӑксен юрӑпа ташӑ ансамбльне ертсе пыма пуçларӑм".

А.Юдин Вӑрнарти ял хуçалӑх техникумĕнче нумай çул ĕçленĕ. Вӑл вĕренекенсене пухса йĕркеленĕ хор кĕрлесе кӑна тӑнӑ. Тĕрлĕ смотрсемпе конкурссене хутшӑннӑ. Мускава, Мурома, Чул хулана, ытти çĕре çитсе килнĕ. Атӑл тӑрӑхĕнчи ял хуçалӑх техникумĕсенче пултарулӑхне кӑтартнӑ. 70-мĕш çулсенче А.Юдин тӑрӑшнипех "Студентсен çуркунни" конкурс йĕркелесе янӑ. "Çав вӑхӑтрах профориентаци ĕçне те туса пынӑ. Ялсем тӑрӑх çӳресе вĕренекенсене пухаттӑмӑр. Кашнинчех илемлĕ пултарулӑх ушкӑнĕсемпе çула тухнӑ, концертсем кӑтартнӑ, – каласа парать Анатолий Иванович. – Пĕррехинче питĕ интереслĕ самант пулчĕ. Сцена çине тухса тӑтӑмӑр, юрра манса кайрӑм. Гена Максимов вĕренекен те пурччĕ. Ун чухне вĕсем виççĕн юрлатчĕç. Каялла кĕтĕмĕр. Аса илтĕм. Тухсан каллех манса кайрӑм. Кусем мана хӑлхаран пӑшӑлтатаççĕ. Çĕнĕ юрӑпа сцена çине тухма питĕ йывӑр. Мĕншĕн тесен тональноçе пĕлместĕн, кĕввине тӑрукках аса илейместĕн. Виççĕмĕш хутĕнче тухсан аран аса илсе юрлаттартӑм".

Анатолий Юдинӑн пурнӑçĕнчи тепĕр тапхӑр – районти культура çуртĕнче ĕçленĕ çулсем. Унта вӑл 1982 çулта Виталий Кольцов чĕннипе пынӑ. Унччен район администрацийĕн культура пайĕн ертӳçинче тӑрӑшнӑ. "Администраци ĕçĕ килĕшмест. Ман чуна пултарулӑх ĕçĕ cывӑх. Ташӑ-юрӑпа ĕçлесен нервӑсем те лӑпланаççĕ. Концертсем лартса çӳретĕн. Çавӑ мана ытларах килĕшетчĕ", – ĕçрен кайнине сӑлтавлать А.Юдин.

Шел те, хальхи вӑхӑтра хорсем модӑра мар. "Çамрӑксене урӑххи интереслентерет. Музыка, ташӑ жанрĕсем улшӑнчĕç те – хора хисеплесех каймаççĕ. Çара кӑкӑрĕсене, урисене кӑтартса ташласшӑн. Унччен ун пек марччĕ", – пӑшӑрханса калаçать пилĕк çĕр çынлӑ хорсем пухма пултарнӑ Анатолий Иванович. Çав çулсенче колхозсемпе совхозсен, кашни предприятипе организацин хӑйĕн хорĕ пулнӑ. Пысӑк уявсенче вĕсене пĕрлештерсе халӑх умне кӑларнӑ. Халĕ кун пирки аса илсе калаçни кӑна ĕнтĕ.

Ватӑ çынна культура пуласлӑхĕ хытӑ канӑççӑрлантарать. "Культура ĕçченĕсем çул тӑрӑх çӳп-çап пухса çӳренипе культура малалла каяймĕ. Юрӑ-ташӑ манӑçа тухрĕ. Музыкӑна вĕреннĕ çынсем сахаллансах пыраççĕ. Вĕсене улӑштаракансем урӑх енпе ĕçленĕ çынсем. Хальхи вӑхӑтра тракторист та, комбайнер та культура çуртĕнче ĕçлеме пултарать, – чунтан пӑшӑрханса калаçрĕ ватӑ çын. – Тракториста темиçе уйӑхра тухма пулать. Музыкӑна вара вун виçĕ çултан кая мар вĕренмелле".

> ✓ МУЗЫКӐНА ВĔРЕННĔ ÇЫНСЕМ САХАЛЛАНСАХ ПЫРАÇÇĔ. ВĔСЕНЕ УЛӐШТАРАКАНСЕМ УРӐХ ЕНПЕ ĔÇЛЕНĔ ÇЫНСЕМ. ХАЛЬХИ ВӐХӐТРА ТРАКТОРИСТ ТА, КОМБАЙНЕР ТА КУЛЬТУРА ÇУРТĔНЧЕ ĔÇЛЕМЕ ПУЛТАРАТЬ

Анатолий Иванович 1990 çулта ветерансен хорне йĕркеленĕ. Коллектива виçĕ çултан "халӑх" ята панӑ. Хӑй вӑл юрлама анчах мар, ташлама та юратать, сӑвӑ калама кӑмӑллать. "Пĕтĕм жанрлӑ юрӑсене юрататӑп, классикӑна та кӑмӑллатӑп. Анчах ӑна юрлама йывӑртарах. Чиркӳ юррисене те юрланӑ. Сюитӑсем тума юрататтӑмччĕ. Халӑх хорне çӳрекенсене такмаксем те калаттарнӑ", – тет. Анатолий Иванович каланӑ тӑрӑх – çулталӑк тӑрӑшсан кирек кама та хитре юрлама вĕрентме пулать иккен.

А.Юдин тивĕçлĕ канӑва тухсан та юратнӑ ĕçне пӑрахман. Малалла та ĕçлес туртӑмĕ пулнӑ. Юлашки çулсенче вӑл культура паркĕн ертӳçинче тӑрӑшнӑ. Тӑватӑ-пилĕк çул каялла должноçа кĕскетнипе ватӑ çын ĕççĕр тӑрса юлнӑ. Çакӑн пек майпа ĕçрен тухмалла пулнишĕн питĕ кӳреннĕ вӑл. "Хӑйсем каялла илетпĕр тесе шантарчĕç. Илмерĕç. Кӳрентĕм уншӑн. Нервӑсем йӑлт пӑсӑлчĕç çакӑн хыççӑн. Тĕрĕслĕх шыраса чупмарӑм ĕнтĕ", – тет 74-ри ватӑ. Хора çӳреме те чарнӑ ӑна. Чӑрмантарать имĕш.

Ĕмĕрне культура тытӑмĕнче тӳрĕ кӑмӑлпа ĕçлесе ирттернĕ Анатолий Юдин пуçне усмасть. "Нарспи" спектакле çĕнĕлле лартнӑ вӑл. Тӑхтаман рольне хӑй вылять. "Аллӑ çула çитиччен авланмасӑр пурӑнтӑм..." – юрласа ячĕ калаçса ларнӑ хушӑрах. Спектакле тӑван ялĕнче, Красноармейски районĕнчи Кушкӑра, кӑтартасшӑн. Тепĕр ĕмĕчĕ – çак ялта çуралса ӳснĕ паллӑ çынсене пĕрле пухасси, вĕсен курӑмлӑ ĕçĕсемпе тата пултарулӑхĕпе ентешĕсене паллаштарасси. Кушкӑра асфальт çул çукки те пӑшӑрхантарать ӑна. "Ял пуçне çитет-ха. Малалла вара? Урам çӑрӑлса кӑна тӑрать", – тет.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА.**
Вӑрнар районĕ

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Ӑçта вĕсем, чӑвашла сценарисем?..

***Юлашки вӑхӑтра тӑван чĕлхе кӑвар чĕреллĕ сӑвӑçӑмӑр кĕтнĕ, шаннӑ пек «хĕрлĕ хĕрнĕ хурçӑ, çунтаракан çиçĕм, вĕри вутлӑ çулӑм» вӑй-хӑватне çухатса пынине çирĕплетекен тĕслĕхсене час-часах илсе кӑтартакан пултӑмӑр.***

Çак шухӑша ӑша хывма Чӑваш Енĕн тĕп хулинче тĕпленнĕ хӑш-пĕр ӑсчах: «Чӑваш чĕлхи пĕтет!» – тесе палкани те нумай пулӑшать. «Саманисем саккӑр, тамашисем тӑххӑр» пулнӑ тапхӑрта та чӑвашлӑх туйӑмне салатса пĕтермен халӑх умĕнче çакӑн пек сӑмахсемпе перкелешни вырӑнсӑр кӑна мар, пысӑк çылӑх тунипех танах. Çавӑн йышшисене Спиноза философӑн «пĕлместĕр, анчах сӳпĕлтететĕр» каларӑшне аса илтерес килет.

Чӑваш чĕлхи пулнӑ, пур, пулать! Касаккасси чӑвашĕ хыççӑн тулли шанӑçпах çирĕплетсе калар-ха çак сӑмахсене. Турӑ пулӑшсан, хамӑр тӑрӑшсан нацин тĕп пуянлӑхне упраса хӑварӑпӑр кӑна мар, вӑл тӑвакан мухтавлӑ та пархатарлӑ ĕçсен шутне ӳстерсе пырӑпӑр. Тӑван чĕлхе пуласлӑхĕшĕн нимене кӑна çĕкленмелле. Анчах чӑнлӑхпа тĕрĕслĕх умĕнчен куçа хупса иртеймĕпĕр: пирĕн хальлĕхе çак тĕллеве ĕçпе çирĕплетме пĕрлĕх туйӑмĕ çитеймест-ха.

Тӑван чĕлхе ыйтӑвĕсемпе ирттерекен тĕрлĕ тĕл пулура, канашлура унӑн малашлӑхĕшĕн çунса-хыпӑнса тӑракансем камсем тетĕр? Шел те, чĕлхеçĕсем те, ӑслӑлӑх докторĕсем те, çыравçӑсем те мар. «Чан çапакансен» хушшинче ытларах чухне чӑваш чĕлхипе литературине вĕрентекен педагогсем. Çав ушкӑнрах манӑн культура учрежденийĕсенче ĕçлекенсене те курас килет. Чĕре çине аллӑма хурсах çапла ыйтатӑп: ау-у, ӑçта пытаннӑ эсир, тӑван халӑхпа тап-таса, чĕлхене çӳпĕлемесĕр чӑвашла калаçакан культура ĕçченĕсем?

Çак ыйтӑва ӑнсӑртран çĕклеместĕп паян. Республикӑри районсенчи культура çурчĕсемпе вулавӑшсенче иртекен мероприятисене хутшӑнни, яваплӑ çынсем ытларах чухне сцена çинчен вырӑсла калаçни çак калаçӑва хускатма хистерĕ. Акӑ мĕн каларĕ кун пирки Йĕпреç район администрацийĕн социаллӑ аталану пайĕн пуçлӑхĕ Инна Алексеева: «Культура пурнӑçĕпе çыхӑннӑ ыйтусене те тӑтӑшах татса пама тивет. Районта тĕрлĕ мероприяти иртет. Шел те, вĕсене хальлĕхе куракансен кӑмӑлне туллин тивĕçтермелĕх хатĕрлейместпĕр. Тĕп çитменлĕх – чӑвашла çырнӑ сценарисем çукки».

Чӑнах та, паян çавӑн пек сценарисем пачах та çук тесе пĕтĕмлетмĕпĕр, анчах вĕсем ытла та сахалли республикӑри культура учрежденийĕсенче тӑрӑшакансене самаях ура хурать. Камӑн çырмалла-ха çав сценарисене? ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви унччен Халӑх пултарулӑхĕн çурчĕпе пĕрле ялти талантсене пулӑшма чӑвашла çырнӑ брошюрӑсем ярса паратчĕ. Вĕсемпе уявсем иртернĕ чухне усӑ курма меллĕччĕ. Чӑваш çыравçисен пĕрлĕхĕнче те культура ĕçченĕсем валли сценарисем хайлакан поэтсемпе писательсем пурччĕ. Хӑй вӑхӑтĕнче ку енĕпе çанӑ тавӑрсах ĕçленĕ Петĕр Ялкир сӑвӑçӑн пархатарлӑ тĕслĕхне манӑçа хӑварас марччĕ...

Нумаях пулмасть-ха «Хыпар» хаçатӑн вырӑнти корпунктне Канаш районĕнчи Çĕнĕ Шуртан клубĕн пуçлӑхĕ Виталий Дмитриев кĕрсе тухрĕ. Вӑл – манӑн ентеш, çавӑнпа та хӑюллӑнах пулӑшу ыйтма килнĕ. Çĕнĕ Шуртан, виçĕ район чиккинче вырнаçнӑскер, Çиçĕмкассипе Пĕчĕк Упакасси /Йĕпреç районĕ/, Кушлавӑшпа Хура Çырма /Вӑрнар районĕ/ тата Йӑлмаччапа Вӑтакас Татмӑш, Пукӑртан /Канаш районĕ/ ялĕсенче пурӑнакансене хӑнана чĕнсе тĕл пулу йĕркелесшĕн-мĕн. «Вӑл асра юлмалла ирттĕр тесен пире лайӑх сценари кирлĕ», – именчĕклĕн сӑмах хушрĕ Виталий Кузьмич, ку тӑрӑхри ӑста купӑсçӑ, пултаруллӑ концертмейстер тата ачасене шкулта вокал искусствине алла илме хӑнӑхтаракан педагог. «Пĕр ӑс – лайӑх, икĕ ӑс – татах та лайӑхрах» тенине асра тытса иксĕмĕр ĕçе пикентĕмĕр, тӑван чĕлхепе самаях ӑнӑçлӑ ĕç майлаштартӑмӑр.

Юлашкинчен çакна каласа хӑварасшӑн: чӑвашла сценарисем çырса хатĕрлес ĕçе ӳлĕмрен культура çурчĕсемпе вулавӑшсенче ĕçлекенсене хӑйсенех явӑçтарасчĕ. Тӑрӑшсан вĕсен йышлӑ çарĕ «сӑрт-тӑва та тепĕр май çавӑрса лартма» пултарĕ. Манӑн шухӑшӑмпа – çĕнĕ ĕмĕрти идеологи фрончĕн ĕçченĕсемшĕн çакӑ «усман çерем» пулмĕ. Тата вĕсем ку ĕçе чун-чĕрисен киленĕвĕпе тытӑнсан тӑван чĕлхе нихçанхинчен те янравлӑраххӑн та çепĕçреххĕн илтĕнсе шӑранма пуçлĕ. Çакӑн хыççӑн хӑш-пĕр культура учрежденийĕсенче «Ырӑ сунса кĕтетпĕр!» тесе чӑвашла çырнине кĕтсе илессе шанассӑм килет...

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

КУРАВ

## Питĕр хули - ачасен куçĕпе

***Шупашкарти "Асамат кĕперĕ" центрта "Ачасен пултарулӑхĕнчи Питĕр" курав ĕçлет. Ку проект Вырӑс музейĕн Раççей музей педагогикин тата ачасен пултарулӑхĕн центрĕ Санкт-Петербург хулин 300 çулхи юбилейне халалласа хатĕрленĕскер.***

Конкурса çĕр-шыври чылай хулапа облаç, Беларуç, Франци, Шотланди, Чехи, Англи, Китай ачисем 2,5 пине яхӑн ĕç тӑратнӑ. Выставкӑпа Питĕрте, Атланта хулинче /АПШ/, Эрĕнпур облаçĕн ӳнер искусствин музейĕнче, Тутарстанри ӳнер искусствин патшалӑх музейĕнче паллаштарнӑ. Халĕ ӑна Чӑваш Ен çыннисем те курма пултараççĕ.

Çамрӑк художниксен /вĕсен шутĕнче Питĕре лайӑх пĕлекенсем, унпа кĕнекесемпе фильмсем, аслисен калавĕсем тӑрӑх паллашнисем/ ĕçĕсем юхан шывсемпе каналсенчен, кĕперсенчен пуян хула çинчен каласа кӑтартаççĕ. Куравра хула историйĕн тĕрлĕ тапхӑрĕ – ӑна никĕсленĕ самантран пуçласа паян кунчченхи – куç умне тухса тӑрать.

Ачасем хӑйсен ӳкерчĕкĕсенче Петропавловск крепоçне, Сенат лапамне, Çуллахи сада, Нева çыранĕсене, Раççей императорĕсен хулари тата ун тулашĕнчи çурчĕсене, тĕнчипе палӑрнӑ Михаил Ломоносова, Александр Пушкина, Питĕрте авал пурӑннӑ тата хальхи вӑхӑтра тĕпленнĕ ахаль çынсене сӑнланӑ. Çамрӑк художниксем Петербургри паллӑ пулӑмсене те, тĕслĕхрен, III Александр палӑкне уçнине, тӑрӑшса ӳкернĕ. Ленинград блокади – уйрӑм пай. Пĕчĕкскерсем синкер çав кунсене хӑйсем курман пулин те блокадӑна лекнĕ тантӑшĕсен йывӑрлӑхĕсене чунпа-чĕрепе туйса илнĕ.

Экспозиции Петербург 300 çул тултарнӑ тĕле хатĕрленĕ ĕçсем, 1950-1960 çулсен вĕçĕнче тунӑ ӳкерчĕксем, 2008 çулта Вырӑс музейĕн 110 çулхи юбилейне халалланӑ курава тӑратнӑ ĕçсем кĕнĕ. Раççейĕн тĕрлĕ хулинче пурӑнакан ачасен ӳкерчĕкĕсенче авалхи хула тĕрлĕ енлĕн тухса тӑрать, вĕсен шухӑшлавĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пулнине çирĕплетет.

■ **И.СЕРГЕЕВА**

ИЛЛЕ ТӐХТИ: 125 ÇУЛ

## Çыравçӑ асрах

***Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхĕсен институчĕн литературоведенипе фольклористика пайĕ Тӑвай районĕнчи Элпуç вӑтам шкулĕнче "Илле Тӑхтин чӑваш литературинчи вырӑнĕпе пĕлтерĕшĕ" ятпа анлӑ лару ирттерчĕ.***

Ларӑва район администрацийĕн пуçлӑхĕ В.Ванерке, ял тӑрӑхĕн ертӳçи В.Козлов уçрĕç. ЧПГӐИ директорĕн ӑслӑлӑхпа аталану енĕпе ĕçлекен çумĕ Г.Николаев, Элпуç вӑтам шкулӑн директорĕ Л.Кабакова, И.Тӑхти тӑванĕсем О.Михайлова, Н.Ефимов, С.Ефимова тухса калаçрĕç.

Институт ĕçченĕсем Илле Тӑхти пултарулӑхне халалланӑ ӑслӑлӑх доклачĕсем турĕç. Халӑх В.Родионовӑн "Илле Тӑхтин илемлĕ тĕнчи" докладне питĕ кӑсӑкланса итлерĕ. И.Кириллова çыравçӑн паянхи чӑваш литература пĕлĕвĕнчи вырӑнĕ çинчен каласа пачĕ. Вӑл Илле Тӑхти пултарулӑхĕн хӑйне евĕрлĕхĕ пирки диссертаци çырса хӳтĕленĕ. В.Ендеров "Илле Тӑхти – фольклорист" темӑпа калаçрĕ. О.Терентьева "Илле Тӑхти пултарулӑхĕнче тавралӑх халапĕсем сӑнланни" темӑна уçса пачĕ.

Тӑхтин тавралӑха çырса кӑтартасси тӑван ен культурипе тачӑ çыхӑннӑ. Акӑ пĕр тĕслĕх: "Пирĕн асаттесем выльӑх-чĕрлĕхлĕ чух, мул пур чух Элкӳл сӑртĕнче çулне икшер хут тихасемпе хурсем, вӑкӑрсем пусса чӳк тунӑ. Унта темиçе ял пухӑннӑ. Пурте эрмексемпе, нухратлӑ, хурт пуççиллĕ хушпусем, хĕрсем хаклӑ тухьясем тӑхӑнса пынӑ. Каччӑсем лаша пуçлӑ тура пиçиххи çумне çакса пухӑннӑ. Пыллӑ сӑра ĕçсе, сӑрнай купӑс каласа савӑннӑ". Тĕпчевçĕ хӑй те Тӑвай районĕнче çуралса ӳснĕ пирки тӑван енне, унпа çыхӑннӑ халапсене пушшех те юратса тĕпченĕ.

Н.Ефремова-Ильина И.Тӑхти пултарулӑхĕнче чӑваш халӑх сӑмахлӑхĕ ӳкерĕнни çинче тĕплĕн чарӑнса тӑчĕ, çыравçӑн хайлавĕсенче юмахсем, сӑпка юррисем, ваттисен сӑмахĕсем, пил, юрӑсем тĕл пулнине палӑртрĕ. Е.Федотова "Матюк аппа" калавĕнчи тĕлĕк сӑнарлӑхĕ çинчен каласа кӑтартрĕ. А.Кузнецов чĕлхеçĕ Илле Тӑхти калавĕсен илемлĕ чĕлхин хӑйне евĕрлĕхĕ çинчен калаçрĕ. Элпуçĕнчи вӑтам шкулта чӑваш чĕлхипе литературине вĕрентекен П.Никифоров ертсе пынипе шкул ачисем Илле Тӑхти пултарулӑхĕпе паллаштарчĕç. Е.Иванова Илле Тӑхти çинчен çырнӑ сӑвва вуласа пачĕ. Истори учителĕ А.Васильев шкул музейĕпе паллаштарчĕ. Унта ĕлĕкхи чӑваш тумĕсем, ĕç хатĕрĕсем, музыка инструменчĕсем /чӑваш кĕсли те пурччĕ/, кивĕ сӑн ӳкерчĕксем упранаççĕ. Музейре хӑтлӑ. Шкулĕ те чаплӑ. Çыннисем те ырӑ.

Уява хутшӑннисем пурте Нюшкассине, çыравçӑн тӑван ялне, çитсе курчĕç. Унта Илле Тӑхти çуралнӑ кил халĕ те типтерлĕ. Пахчинче чечексем ӳсеççĕ. Пӳрт стени çинче "Çак килте Илле Тӑхти çуралнӑ /1889-1938/" тесе çырнӑ хӑма çакӑнса тӑрать.

Е.Михайлов археолог Элпуç ялĕ таврашĕнче экспедици ирттерчĕ.

■ **Елена ФЕДОТОВА,**
**филологи ӑслӑлӑхĕсен кандидачĕ**



*● Илле Тӑхти çуралнӑ кил умĕнче.*

**Кӑларӑма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**




# Вăл Ленинграда хӳтĕленĕ

...1941 çулхи çурла уйăхĕ. Фашист эшкерĕсем совет çарĕсем хирĕç тăнине сирсе Ленинград облаçне вирхĕнсе кĕнĕ, Ленинград хули çывăхне – Колпино хулине – ыткăннă. Тӳрех хулана хăйне те, паллă Ижорски заводне те ярса илме ĕмĕтленнĕ. Унта паха йышши хурçă, карапсемпе танксем валли броня туса кăларнă. Колпино оборонăн малти линийĕнчен 3-4 çухрăмра çеç пулнă. Оборона линине татмашкăн фашистсем совет окопĕсем çине пин-пин авиабомба, снаряд тăкнă. Взрывсене пула çĕр пусăрăнсан татти-сыпписĕр вут-хĕм сирпĕтекен Гитлер çыннисене хирĕç совет салтакĕсем тăнă, тăшмана Анăçалла хăваланă...

Колпино хули тата Кронштадт крепоçĕ – Ленинград çывăхĕнчи çак икĕ вырăна тăшман ярса илеймен. «Çар мухтавĕн хули» хисеплĕ ята ку хуласем тивĕçлипе çĕнсе илнĕ.

1967 çулта Колпинăна хӳтĕленĕ паттăрсене асăнса мăнаçлă палăк туса лартрĕç. Юнашарах тупă вырнаçтарчĕç, вăл совет салтакĕсене фашист çын çиенĕсенчен хӳтĕленĕ, вĕсен танк бронине витĕр шăтарнă.

Ленинград облаçĕнчи Никольски хулинчи «Беркут» отряд шыравçисем /вĕсене Алексей Макаренко ертсе пырать/ облаçри тата Санкт-Петербургри ытти шырав отрячĕпе, РФ Оборона министерствин 90-мĕш уйрăм ятарлă батальонĕпе пĕрле çак палăкран инçех те мар, хаяр çапăçусем пынă вырăнта шырав ĕçĕсем ирттереççĕ. Вĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи паллă япаласене, Ленинграда хӳтĕлесе пуç хунисене шыраççĕ.

«Ас тăвăмăн кĕрхи вахтине» ирттернĕ май шыравçăсем çурла уйăхĕн варринче ĕçе пуçăнчĕç, авăн уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне 104 хĕрлĕ армеецăн шăмми-шаккине тупрĕç. 9 паттăр кам пулнине палăртма май килнĕ. Вĕсен хушшинче – 1905 çулта çуралнă Андрей Лукич Мозаев, стрелоксен 268-мĕш дивизийĕн хĕрлĕ армеецĕ, 1942 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче вилнĕ. Чăваш АССРĕнчи Çĕмĕрле районĕнчен.

Вĕсене Никольски хулинчи тăванла масара чыслăн пытарма йышăнчĕç.

Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче 12 сехетре Ленинграда хӳтĕлесе пуç хунă салтаксене хисеплесе пытарма Тăванла масар çине Никольски хулин ертӳлĕхĕ, унта пурăнакансем, вăрçă тата ĕç ветеранĕсем, Ленинград облаçĕн саккунсем кăларакан Пухăвĕн тата хула канашĕн депутачĕсем пухăнчĕç. Çамрăксемпе шкул ачисем йышлăн пулчĕç.

Никольски хула канашĕн пуçлăхĕ Вера Юсина микрофон патне пырать:

– Паян эпир хамăрăн граждан тивĕçне пурнăçлама – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенче çĕр-шыва, Ленинграда, пирĕн тăван Никольски çĕрне хӳтĕленĕ салтаксене пытарма – Тăванла масар çине пухăнтăмăр. Эпĕ шыравçăсене, отряд командирне Алексей Макаренкăна тăван çĕре юратса çапла пысăк ĕç туса ирттернĕшĕн чун-чĕререн тав тăватăп. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 70 çула яхăн иртрĕ. Анчах та вăрçă пуç хунă юлашки салтака пытармасăр вĕçленмест. Паттăрсене, Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисене ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнар, ĕмĕр-ĕмĕр мухтав вĕсене.

Облаç саккунсем кăларакан Пухăвĕн депутачĕ Иван Хабаров сăмах илчĕ:

– Çак куна пирĕнтен кашниех асра тытĕ. Хĕрлĕ Çарăн вăрçăра пуç хунă 104 салтакне паян паттăрсене пытарнă пек сăваплă çĕре парăпăр. Вĕсенчен 9-шĕн ячĕ паллă пулни савăнтарать. Аслă Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейне кунта пуç хунă паттăрсен тăванĕсем килессе шанатпăр.

– Вилнисене ĕмĕр-ĕмĕрех тивĕçлипе асра тытса пурăнăр, аслисене хисеплĕр, хамăрăн Тăван çĕр-шыва упрăр. Вăрçăра пуç хунисен чунĕсем Çӳлти Патшалăхра пулччăр, – терĕ çамрăксене Иван Филиппович.

Хĕç-пăшаллă Вăйсен ветеранĕн, отставкăри подполковникăн, Никольски хулин хисеплĕ гражданинĕн Валерий Казаковăн сăмахĕсем пурин чунне те хускатрĕç:

– Эпир Ленинграда хӳтĕлесе вилнисемпе сыв пуллашатпăр. Никольски çĕрĕ çакăнта пуç хунисен юнĕпе пĕвеннĕ. Çапăçура вилнĕ пин-пин салтака тивĕçлипе пытарман-ха. Эпир, ветерансем, паянхи ăру пирĕн пекех Тăван çĕр-шыва юратнине, кирлĕ пулсан ăна хӳтĕлеме кар тăрасса шанатпăр.

Ленинград фрончĕн 55-мĕш çарĕн çапăçура пуç хунă салтакĕсен ячĕсене вулаççĕ, вĕсене медальонĕсем тата япалисем тăрăх палăртнă.

Тĕлĕнмелле ĕçсемпе палăрнă Микула Святитель чиркĕвĕн настоятелĕ Михаил молебен ирттерчĕ.

Пурте пĕр самант шăп тăраççĕ. Пăшалран пенĕ май салтаксене пытараççĕ. Тăванла масара тупăксене антараççĕ. Часах вил тăпри чечексемпе витĕнет. Никольски çыннисем палăк умне чечексем хураççĕ. 10 çулсенчи арçын ача куртки кĕсйинчен икĕ пан улми кăларчĕ те палăк умне чечек кăшăлĕсен хушшине хучĕ...

■ **Леонид ЯКУШИН**

АЙĂПЛАВ

# Кролик валли... наркотик

***Республикăн Аслă сучĕ апелляци тишкерĕвĕн кăтартăвĕсем тăрăх Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕн кăçалхи утă уйăхĕнче палăртнă приговорне улăштармасăр хăварнă. Сăмах Федерацин наркотĕрĕслев службин Чăваш Енри управленийĕн химиксен хулинчи пайĕн аслă оперуполномоченнăйĕ пулнă 29 çулти çамрăк пирки пырать.***

Çапла вара экс-опер тĕлĕшпе приговор саккунлă вăя кĕнĕ. Ăна УК 285 статйин 3-мĕш пайĕпе /должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курни/ айăпланă, 2 çуллăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă.

Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – оперуполномоченнăй Наркотĕрĕслев службин Çĕнĕ Шупашкарти пайĕн наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене тупса палăртас тĕлĕшпе ĕç кăтартăвĕсем япăххине пĕлнĕ май вĕсене правăна пăсса лайăхлатма шут тытнă. Тепĕр çын урлă пĕр арçынна улталаса Çĕрпӳ районĕнчи уйра кролик валли тесе курăк пухма сĕннĕ. Чăннипе вара çав курăк техника тĕллевĕпе çитĕнтерекен кантăр пулнă.

Пĕлтĕрхи авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче хайхи «курăка» пухакан, хăй саккунсăр ĕç тунине тавçăрма та пултарайман арçынна наркотĕрĕслев сотрудникĕсем тытса чарнă. Вăл пухнă «курăк» наркотик – 3,3 кг ытла марихуана – пулнине пĕлсен арçын тĕлĕнсех кайнă.

Кайран ун тĕлĕшпе саккуна пăсса УК 228 статйин 2-мĕш пайĕпе /наркотик упранипе çыхăннă статья/ саккуна пăсса уголовлă ĕç пуçарнă, ăна хупса хунă, 2,5 уйăх ытла камерăра тытнă. Оперуполномоченнăй çапла хăтланса преступлени туни палăрсан тин арçын саккуна пăсманнине кура ăна уголовлă майпа йĕрлеме пăрахнă. Наркотĕрĕслев сотрудникĕн хăйĕн пирки уголовлă ĕç пуçарнă.

СК следователĕсем Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн тата ФСКН управленийĕн хăйĕн хăрушсăрлăхĕн пайĕн сотрудникĕсемпе алла-аллăн ĕçленĕ май коррупци сĕмĕллĕ преступлени тунă опера уголовлă майпа явап тыттарма май килнĕ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

## Училище – 80 çулта

***Çак кунсенче Шупашкарти ӳнер училищи (техникумĕ) 80 çулхи юбилейне паллă тунă. Ăна халалласа Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче уяв иртнĕ, студентсемпе преподавательсен куравне йĕркеленĕ.***

Хулари чи авалхи çуртра вырнаçнă вĕренӳ учрежденийĕ 1934 çулта Улатăрта уçăлнă. Тепĕр ултă çултан ăна Шупашкара куçарса килнĕ. Хăй вăхăтĕнче унта республикăри чи паллă художник-педагогсем ĕçленĕ: А.Спиридонова, П.Григорьев-Савушкин, Р.Ермолова, О.Филиппов, В.Гурин тата ыттисем. Училище паллă вун-вун ӳнерçĕпе декоратора, ăслăлăхпа культура ĕçченне çитĕнтернĕ. Вĕсем республикăра, çĕр-шывра, хăшĕ-пĕри тĕнчере пысăк ят-сум çĕнсе илнĕ. Вĕренӳ учрежденийĕ паянхи кун та ĕлĕкхи ырă йăласене тытса пырать. Вĕренекенсем "Живопиç", "Дизайн", "Театрпа декораци ӳнерĕ", "Ал ĕç ăсти" специальноçсемпе пĕлӳ илеççĕ.

**А.ПЕТРОВ.**

ЧЫСЛАВ

# «Сирĕн çитĕнĕвĕрсем пире çунатлантараççĕ»

## Маттур та пултаруллă спортсменсене парнесемпе чысларĕç

***Çак сăмахсенчен пуçларĕ ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников тĕнче тата Европа ăмăртăвĕсенчен медальсемпе таврăннă спортсменсемпе вĕсен тренерĕсене стипендипе преми илмеллине ĕнентерекен сертификат панă май. Ведомство йĕркеленĕ савăнăçлă мероприяти ЧР Наци библиотекинче иртрĕ.***



"Кăçал эпир сирĕнпе иккĕмĕш хут тĕл пулатпăр, мĕншĕн тесен курса калаçмалли сăлтав пур. Çавăн пекех паян эпир çуллахи сезона пĕтĕмлететпĕр: сирĕн наградăсем пирĕншĕн – чи пысăк парне. Тĕрлĕ чемпионатра мала тухса эсир республика тата çĕр-шыв ят-сумне çӳле çĕклетĕр. Кашнин Олимп, Сурдлимп тата Паралимп вăййисенче хутшăнма шанăç пур. Малашне те çитĕнӳ картлашкипе çӳлерех те çӳлерех хăпарма сунатăп", – терĕ Сергей Владимирович.

Сертификата тивĕçнисен йышĕнче – çăмăл атлетсем, велосипедистсем, шашистсем, ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсем, аэробистсем, бадминтонçăсем. Вĕсен йышĕнче чи сумли – Олимп вăййисен бронза призерĕ Ирина Калентьева. Кăçал вăл пире тепĕр çитĕнӳпе савăнтарчĕ: Норвегире маунтинбайк енĕпе иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче иккĕмĕш кăтартупа палăрчĕ. "Кунашкал ăмăртăва эпĕ пĕрре мар хутшăнтăм, унта темиçе хут та малти вырăнсене йышăнтăм. Анчах юлашки çулсенче ăнмарĕ, çавăнпа ку "кĕмĕл" маншăн паян чи пахи. Чемпионатран эпĕ хавхаланса та савăнса таврăнтăм, çĕнĕ вăйпа халĕ те кĕрешĕве тухма хатĕр", – терĕ пултаруллă спортсменка. Чăн та, Патăрьел хĕрĕ нимĕнле йывăрлăхран та хăрамасть, яланах çĕнтерӳ патне талпăнать. "2016 çулхи Олимпиадăна хутшăнас тĕллевлĕ вăл", – пĕлтерчĕ унăн тренерĕ Владимир Краснов.

Ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен спортĕнче ят-сум çĕнсе илнĕ тепĕр ентеш вăл – Олимп резервĕсен училищинче вĕреннĕ, ятарлă 5-мĕш спорт шкулĕн воспитанникĕ Наталья Гольц. 2010 çулччен вăл Европа тата тĕнче чемпионачĕсенче чи вăйли пулнă, анчах йывăр сурана пула темиçе çул ăмăртусене хутшăнайман. Мускавра пурăнакан пике нумаях пулмасть тĕнче чемпионатĕнче бронза медаль çĕнсе илме пултарнă. "Тахçантанпах спорта таврăнасси пирки шухăшласа пурăнаттăм. Тинех ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ. Чемпионатчен пĕтĕм тĕнчери турнирсенче вăй виçрĕм, хама тĕрĕслесе пăхрăм. Вăй-хăват çухалманнине туйрăм, мала тухма пултарасса ĕнентĕм. Çакă пулăшрĕ те ĕнтĕ тĕнче ăмăртăвĕнче "бронзăшăн" кĕрешме", – терĕ Наталья Чăваш Ене килсе курма май пулнăшăн савăннине пĕлтерсе.

**СИРĔН НАГРАДĂСЕМ ПИРĔНШĔН – ЧИ ПЫСĂК ПАРНЕ. ТĔРЛĔ ЧЕМПИОНАТРА МАЛА ТУХСА ЭСИР РЕСПУБЛИКА ТАТА ÇĔР-ШЫВ ЯТ-СУМНЕ ÇӲЛЕ ÇĔКЛЕТĔР**

Ку хутĕнче мероприятие икĕ шашиста чĕннĕ. Пĕри вăл – 13-ри Даниил Леонидов. Пултаруллăскер кăçал Беларуçре иртнĕ Европа турнирĕнче икĕ вăйăра мала тухса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ, тепĕр тупăшура кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Нумаях пулмасть çамрăк шашист Болгарире иртнĕ тĕнче турнирĕнчен каллех виçĕ "ылтăнпа" таврăннă. Пĕлтĕр те вăл тĕнче ăмăртăвĕнчен малти вырăнсене йышăннă. Тепĕр шашист – спортра пĕрремĕш утăмсем тăвакан 6-ри Артем Тихонов, ача садне кăна çӳретха вăл. Андрей Унтин тренер патĕнче ăсталăха туптама çулталăк каялла кăна тытăннăскерĕн малтанхи çитĕнĕвĕсем вара тĕлĕнтереççĕ: тĕнче ăмăртăвĕнче пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Унăн тренерĕ каланă тăрăх – шашкăпа выляма ăна аслашшĕ вĕрентнĕ, ачана хăйне те çак вăйă кăмăла кайнă. Каярах амăшĕ ăна "Энергия" спорт шкулне çавăтса пынă. Данила пекех пĕчĕклех лайăх кăтартусемпе савăнтаракан шăпăрлан чи ăста шашист пуласса шанаççĕ вĕрентекенсем.

Тĕл пулăва Чăваш Енри чи маттур аэробист, спортăн тĕнче класлă мастерĕ Алексей Германов та килнĕ. Мексикăри Канкун хулинче спорт аэробики енĕпе иртнĕ тĕнче чемпионатĕнче Шупашкарти политехника институчĕн студенчĕ ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Шупашкар каччин пĕрремĕш çитĕнĕвĕ мар ку: 2012 çулта вăл тĕнче чемпионатĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă, спортра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн республикăри аэробика федерацийĕн ертӳçин Оксана Дьячукăн воспитанникĕ кăçал Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премине тивĕçнĕ. Савăнăçлă мероприятие çавăн пекех Паралимпçăсемпе Сурдлимпçăсем хутшăнчĕç: бадминтон ăсти Анастасия Седова, Александр Сорокинпа Константин Репин атлетсем. Вĕсем те Европа тата тĕнче чемпионачĕсенчен медальсемпе таврăннă.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

ĂСЛĂЛĂХ

# Профсоюзсен пĕлтерĕшĕ пысăк

***Авăн уйăхĕн 8-11-мĕшĕсенче Нальчик хулинче Х.М.Бербеков ячĕллĕ Кабарда-Балкар патшалăх университетĕнче Еврази университечĕсен профсоюз организацийĕсен ассоциацийĕн /ЕУПОА/ XXVII съезчĕ иртрĕ.***

ЕУПОА – профсоюзсен Совет Союзĕ арканнă хыççăн йĕл илнĕ чи пысăк юхăм, вăл 9 çĕр-шыври 70 ытла университета пĕрлештерет. 30 çула яхăн аслă вĕренӳ заведенийĕсен культура çыхăнăвĕсене, туслăхне çирĕплетме пулăшать. Юлашки икĕ çулта ассоциацие 11 пуçламăш профсоюз организацийĕ, çак шутра Украина, Беларуç, Кăркăстан, кĕнĕ.

Университетсен профсоюз организацийĕсем пĕрле ĕçленин тухăçлăхне çак съезд та аван кăтартса пачĕ. Унăн ĕçне Армениren, Беларуçрен, Казахстанран, Мускавран, Питĕртен, Шупашкартан тата Раççейри ытти аслă шкултан килнĕ 27 делегат хутшăнчĕ. Профсоюз лидерĕсен форумне М.В.Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн проректорĕ И.Котлобовский усрĕ. Унăн "Вĕренӳ юхăмĕн тухăçлăхне ӳстересси: патшалăх çул-йĕрĕ тата ĕçченсен социаллă гарантийĕсем" доклачĕ съезд ĕçĕн тĕп çулйĕрне палăртрĕ. Вĕренӳ тытăмĕнче реформа ирттернĕ чухне преподавательсемпе студентсене право тĕлĕшĕнчен епле хӳтĕлемелле?

Глобализаци саманинче профсоюз организацийĕсем специалистсем хатĕрлес ĕçхĕлĕн пахалăхне ӳстерес, университетсене тĕнче шайĕнче ырă ят-сум çĕнсе илме майсем туса парас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çавăнпа паян, кашни патшалăх хăйне тĕллĕн аталанса пырать пулин те, мĕн пур аслă шкул умĕнче пĕр тĕллев тăрать: конкурентлăха ӳстересси.

2016 çултан аслă шкулсен тухăçлăхне çеç мар, профессура ĕçĕн тухăçлăхне те хаклама пуçлаççĕ. Журналсенче пичетленнĕ статьясене, ăслăлăх ĕçхĕлне, студентсен хаклавне шута илĕç. Тĕслĕхрен, Мускав патшалăх университечĕ çак çĕнĕлĕхе пурнăçа кĕртмелли сăнав лапамĕ пулса та тăнă ĕнтĕ.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ представителĕ республикăри чи пысăк аслă шкул тĕслĕхĕ çинче Чăваш Енре аслă пĕлӳ парассин тухăçлăхне ӳстерни çинчен каласа кăтартрĕ.

Съезда хутшăнакансем университет хулин территорийĕнче Туслăх аллейи никĕслерĕç. Украинăра граждан вăрçи пынă вăхăтра çак пулăмăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Вăл халăхсен туслăхне тата пĕрлĕхне упраса хăвармалли çинчен аса илтерсе тăрĕ.

■ **Владимир ВАСИЛЬЕВ,**
**ЕУПОА ревизи комиссийĕн председателĕ,**
**И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ профессорĕ**



## Тем те пĕр

**● Сидней /Австрали/ аэропортĕнчи таможня ĕçченĕсем пĕр пассажир багажĕпе интересленнĕ. Чехин 39 çулти гражданинне ухтарсан аэропорт сотрудникĕсем хăйсене хăйсем те ĕненмен: унăн аялти тумĕ ăшĕнче сайра тĕл пулакан кайăксен пысăкăх мар 16 çăмартине тупнă. Мĕншĕн-ха контрабандăна çакăн пек тĕлĕнмелле майпа ăсатма шухăшланă – чех ăнлантарса парайман. Арçын /вăл кам пулнине пĕлтермеççĕ/ саккунсăр майпа груз илсе кайма хăтланнăшăн суд умне тăрĕ.**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

### СУТАТĂП

**648.Çĕнĕ плуг** ПГН-3П-3. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. **Тел. 8-960-308-15-36.**

### ПРОДАЮ

**4.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

**19.Гравмассу,** песок, **керамзит, бой** кирпича. Т. 89033225766.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, бой кирпича.** Доставка. Т. 89030666630.

**372.Песок, гравмассу,** щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

**618.Копалки, сортировки, плуги, дискаторы,** разбрасыватели. Дёшево. Доставка. Т. 8-937-955-98-02.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, журналистика ветеранĕ, 1954-58, 1960-63 çулсенче «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕн çумĕ пулнă

**Павел Афиногенович КРЫСИН**

вилнĕ пирки унăн çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтеретпĕр.

**«Хыпар» Издательство çурчĕн коллективĕ.**

чăваш халăх хаçачĕ
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
ХЫПАР



Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 22.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7393. Заказ 3580.